# ХВЕТĔР УЯР КУЛĂШĔ

Мĕн-ха вăл кулăш, литературăри кулăш....

Чăваш литературинче сатирăпа юмор нихăçан та кайри вырăнта пулман. Çапах та хăйĕн тĕп тĕллевне – общество аталанăвĕнче тĕл пулакан тÿрĕ ĕçпе пурăнакан халăхшăн хирĕçле сăнарсене – бюрократсене, кахалсене, ултавçăсене, йĕркелĕхе пăсакансене, тĕрлĕрен ултавпа суяна тăрă шыв çине кăларассине, вĕсене кулăшпа питлев урлă ăс парассине яланах тĕпе хунă.

Этем пурнăçĕнчи кулăшсене, унăн ĕçри ÿсĕмĕсене, çитменлĕхсене, йăла-йĕркери лайăххипе начаррине май килнĕ таран тĕрлĕ енлĕ тишкерсе пырса кăтартассине пĕтĕмĕшле литература та яланах мала хунă, анчах сатирăпа юмор жанрĕпе çыракансем хăйнееврĕлĕ уйрăмлăхпа палăраççĕ. Вĕсем пурнăçра тĕл пулакан макăрмалли е тарăхмалли пулăмранах кулăшла, илĕртÿллĕ, кăсăклă, çав вăхăтрах курайманлăхпа тулнă питлевлĕ произведени йĕркелеççĕ. Кунта çитменлĕхсене ахаль куçпа асăрхани, сăнлани кăна мар, калас шухăша сатирик е юморист куçĕпе ÿкерсе пама, сăмаха çивĕч тыткалама пултаракан ăста художник кирлĕ.

Çакăн пек художниксенчен пĕри Хветĕр Уяр чăваш литература лаççинче нумай çул хушши тăрăшса самаях пысăк бюрократсемпе ултавçăсене, наянсемпе лÿпперсене вĕри çатма çинче ташлаттарчĕ. Пурнăçра тăтăшах тĕл пулакан тĕрĕсмарлăха ăшшăн питлекен, çивĕччĕн йĕплекен произведени хыççăн произведени калăпларĕ. Чăваш литературин шурсухалĕ пирки сăмах тапратрăмăр пулсан, çыравçă пултарулăхĕн пархатарлă çул-йĕрĕпе тĕплĕнрех паллашар.

Хветĕр Уяр XX ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче, çĕршыва революци юхăмĕ кисретме пикеннĕ вăхăтра, 1914 çулта Самар тăрăхĕнчи чăваш ялĕнче çут тĕнче курнă. Хветĕр ÿссе çын пулнă çĕре çĕршыв çĕнĕ пурнăçпа, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсемпе пурăнма ăнтăлнă. «Çĕнни яланах шăл çĕмĕрсе килет», – тенĕ ваттисем. Революци илсе килнĕ çĕнĕлĕх, чăнах та, халăха пурнăç çине çĕнĕлле пăхма хистенĕ. Халăх ирĕке тухса, ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма пикеннĕ. 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче тĕттĕм чăваш ялĕсенче те колхозсем йĕркеленме тытăннă. Ку таранччен колхоз, пĕрлĕхлĕ ĕç мĕнне пĕлсех кайман хресченсем çак çĕнĕлĕхе пула кулăшла лару-тăрăва кĕре-кĕре ÿкнĕ. Халăхра колхозпа çыхăннă пăтăрмахпа путишле ĕçсем çамрăк Хветĕр куçĕ умĕнчех пулса иртнĕ. Хресчен айванлăхне витĕр курса тăнă пуçлакан çыравçă, нумай шухăшлакан, иккĕленсе тăракан мĕскĕн, çав вăхăтрах пултаруллă хресченсен айванлăхĕнчен шахвăртса кулать. 30-мĕш çулсенче Уярăн сатира хайлавĕсем тĕрлĕ пичет изданийĕсенче кун çути кураççĕ.

Çырмашкăн та Хветĕр Уяр халăхшăн çывăх та ăнланмалла жанртан – сатирăран пуçланă. Унăн малтанхи кулăшла калавĕсемех питех те кирлĕ ыйтусене хускатма пĕлнине кăтартса панă.

Унăн пичетре тухнă пĕрремĕш сатира калавĕ «Майне пĕлмесĕр» (1930 ç.) тăмсайла ĕçлекенсене хытă тивертет. Ырă тĕллевпе пуçланă ĕçех майне пĕлмесĕр пăсса хума пулать иккен.

Çамрăк сатирик кирлĕ ыйту нумай хускатнă. Çивĕччĕн тăрăхласа кулать вăл колхоза кĕмен «инхозсенчен» те («Пурăнма пĕлмен çын»), колхоз ĕçĕнче суя «чир» тупса кахалланса çÿрекенсенчен те («Пĕри те юлман»), хут пĕлмесĕр тĕн серепине лекнĕ хĕрарăмсенчен те («Никам та юлман»).

1930 çулсен вĕçнелле Уяр пултарулăхĕнче ăшă кулăш, юмор палăрать. Совет çыннисен тĕлĕнмелле ырă енĕсене кăтартса çемçен те ăшшăн кулать вăл. Сухаллă мучисем урайне Китай карттине сарса хунă та унти вăрçă ыйтăвĕсене çар пуçĕсем пек çĕрĕ-çĕрĕпе сÿтсе яваççĕ («Ăнсăртран итленĕ калаçу»,1939 ç.). «Чĕмере Павăлĕ» (1938 ç.) калавра сатира та, юмор та, психологилле сăнлани те пур. Колхоз тулашне тăр-пĕччен тăрса юлнă Чĕмере Павăлĕ пуп ывăлĕпе калаçнă хыççăн «тăна» кĕрет. Пуп ывăлĕпе пĕр лав çинче ларса пыни те уншăн киревсĕр ĕç тунă пекех пулса каять. Вăл ăна хăйĕн лавĕ çинчен хăваласа ярать, антарса хăварать. Çак пăтăрмахлă калаçу хыççăнах Павăл колхоза çырăнать.

Уяр сатирик колхоза кĕме тăхтаса тăракан çынсен шухăш-кăмăлне витĕр курса тăнă, вĕсене канăçсăрлантаракан ыйтусен тупсăмне пĕлнĕ. Хресченсем саманана, влаçра ларакансене шанмасăр вăл е ку утăма тума тăхтаса тăнине пĕтерес тесе нумай тăрăшнă. «Ик Ăрахман пĕрне пĕри пăрахман» калавра («Йĕплĕ калавсем», 1941 ç.) автор колхоза кĕме тăхтаса тăракан Кĕске Ăрахман куçĕ еплерех хĕнпе уçăлнине кăтартса панă. Ачаран пĕрле ÿснĕ, пĕр-пĕрне çур сăмахран ăнланма хăнăхса çитнĕ икĕ хресчене колхоз текен пĕрлĕх уйăрса янă. Вăрăм Ăрахман пĕрлешÿллĕ хуçалăха çырăнсан Кĕске Ăрахман унпа калаçми пулнă. Унăн чĕринче шанманлăх хуçаланнă. Иккĕленĕве сирес тесе Кĕске Ăрахман ял-ял тăрăх тухса кайнă, çул çинче тĕрлĕ пăтăрмах курса пĕтнĕ. Çулçÿрев Ăрахман мучин куçне уçнă, вăл ачаран пĕрле ÿснĕ тусĕн хăтланăвне колхоз кÿнĕ çĕнĕлĕх урлă (кÿршĕ ялти колхозниксен пурнăçне курнă хыççăн) ăнланса илнĕ. Икĕ уйрăлми çемьене колхоз уйăрса колхозах çывăхлатать.

Çĕнĕлĕхпе килĕшмесĕр, хăйшĕн çеç тăракан çынсене питлес кăмăл Уярăн çав тери пысăк пулнă. Уяр сатири, социаллă-политикăлла ыйтусем хускатса, шăллă, хаяр сатира пулса тăнă, çĕнĕ пурнăçа çирĕплетме пулăшнă. Тутар ялĕсенче колхозсем йĕркеленнĕ хыççăн та уйрăм ĕçе, хальхи пек каласан «шапаша», çÿрекенсем тупăнкаланă. Пĕрлешÿллĕ ĕçре хăйĕн валли вырăн тупаймасăр ял-ял тăрăх хăма çурса çÿрекен пĕр тутар эртел пухма тухнă. Анчах та колхоз уссине туйса илнĕ ял халăхĕ текех «шапа-

ша» ҫӳреме килӗшмест, пушӑ ял урамӗпе (халӑх пӗрлешӳллӗ ӗҫре) ҫын шыраса ҫӳрекен «шапашник» текех халӑха хӑйпе илсе ҫӳреме ҫуккине ӑнланса илет. Унран ватти те, вӗтти те тӑрӑхлать, ютшӑнать («Иртен-ҫӳрен»).

Колхозсем йӗркеленӗ чухне халӑха пӑтратакан, йӑнӑш ҫул ҫине тӗксе яракан йӑх-яхсен, урӑхла каласан, кулаксен айванлӑхӗнчен те култарать ӑста сатирик. Кулаксем халӑха шӑнман пӑр ҫине лартса хӑварма тӑрӑшса хӑйсем ҫав пӑр ҫине ларса юлаҫҫӗ. «Силос тӑвакансем» (1931) калавра кулаксем комсомолецсене чике тӑршшӗ лартма хӑтланаҫҫӗ. Шыҫманпа Чӑсман силос валли шӑтӑк чаваҫҫӗ, тӗрӗссипе шӑтӑка хӑйсен туприне, пуянлӑхне пытараҫҫӗ. Анчах комсомолецсене хывӑхпа улталаймӑн, вӗсем кулаксен киревсӗр ӗҫне тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ.

«Шӑтӑр-р! – тутарнӑ шӑлӗсене выҫӑ кашкӑрла икӗ кулак. Анчах шӑлӗсем хӑрса ҫитнипе шӑкӑрах хирӗлсе ӳкрӗҫ», – юлашкинчен уҫҫӑн та ҫӗнтерӳллӗн кулать калавҫӑ, Иван Мучилле ахӑлтатса.

Чӑн пурнӑҫра, куҫ умӗнчех пулса иртекен кулӑшла ӗҫсем ҫамрӑк сатирикӑн ӑсталӑхне ӳстерме ҫул уҫса пынӑ. Ҫӳлерех илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем пек ӗҫ-пуҫ тӗттӗм чӑваш ялӗсенче темӗн чухлех пулнӑ. Ҫавӑнпа та Хветӗр Уярӑн кулӑш ӑсталӑхӗ 1930-40 ҫулсенче хӑвӑрт аталаннӑ. Вӑл халӑхшӑн сивлек сӑнарсенчен йӗрӗнсе кулнипе кӑна ҫырлахмасть, вӗсен психологине, моральпе этика хӑйнеевӗрлӗхне пурнӑҫри пекех ҫырса кӑтартма тӑрӑшать. Ку, паллах, ҫыравҫӑн ҫырас пултарулӑхӗ, ӑсталӑхӗ ӳссе пынине кӑтартса парать.

«Ҫӑл» (1940 ҫ.) калавра колхоз председателӗ Ӑрахман типӗ айлӑмра артезиан ҫӑлӗ чавтарас шутлӑ. Вӑл ҫав нушапа райзо пуҫлӑхӗ Заливайкин патне ҫул тытать. Заливайкин Роман Ивановича чаплӑ кӗтсе илет, ҫуллӑ калаҫать. Ӗҫ-пуҫ ҫӑл чавас пирки тапратсан хайхи Заливайкин бюрократ часах шӑпланать. Унӑн урӑх, халех татса памалли ӗҫсем чылай иккен, вӑл колхоз председательне урӑх пуҫлӑх, хӑй пекех карьерист, патне хӑвалать. Ҫӳлте ларакансем пурте сӑмахпа ырӑ. Ӗҫӗ вара ниепле те вырӑнтан хускалмасть. Ҫавӑн йышши икӗпитсенчен пулӑшу кӗтсе илеймессине сиссе Ӑрахман мучи парти райкомне каять те райзо кантурне бюрократсенчен тасатаҫҫӗ. Уйра тинех артезиан ҫӑлӗ чавма тытӑнаҫҫӗ.

Куратпӑр ӗнтӗ, Хветӗр Уяр тӗрӗсмарлӑха чӑтма пултарайман ҫыравҫӑ пулнӑ. Унӑн ҫивӗч куҫӗ тӗлне лекнӗ ултавҫӑсемпе суеҫӗсем, икӗпитсемпе йӑпӑлтисем, куштансемпе сӗмсӗрсем сатирикӑн йӗплӗ сӑмахӗсенчен пытанайман. Вӗсене ҫамрӑк ҫыравҫӑ пӑтранчӑк шыв ӑшӗнче темле пытанса пурнас тесен те, тӑрӑ шыв ҫине илсе тухнӑ.

**Николай ОСИПОВ,**
**ЧППУ аспиранчӗ.**

# ПЕТӖР ЭЙЗИН СӐВВИСЕН ХӐЙНЕЕВӖРЛӖХӖ

Чӑваш поэзийӗпе яппун литератури хушшинчи ҫыхӑнусем пирки калаҫнӑ чух чӑн малтан П.Эйзин поэзийӗ аса килет. Яппун поэзийӗн витӗмӗ пирӗн литературӑна куҫару урлӑ тата евӗрлени урлӑ, урӑхла каласан, реминисценци урлӑ кӗме пултарнӑ. Реминисценци термина Литература энциклопедийӗн словарӗ ҫапларах ӑнлантарать:"В художественном тексте это черты, наводящие воспоминания о другом произведении. Также это невольное воспроизведение автором чужих образов или ритмико-синтаксических ходов." Ку определенипе килӗшӳллӗн, чӑваш поэзийӗнче яппун сӑвӑ формине, мотивӗсене, сӑнарӗсене чӑвашлатса усӑ курни шӑпах, пирӗн шутпа, реминисценци картне ларакан пулӑм.

П.Эйзина илес пулсассӑн, вӑл хӑй те куҫару ӗҫӗпе кӑсӑкланать, Басе сӑввисене чӑвашла куҫарать. Яппун поэзийӗпе вӑл вырӑсла куҫарусем урлӑ та паллашма пултарнӑ. Эйзинӑн поэзийӗнче яппун поэзийӗн витӗмӗ реминисценци урлӑ та палӑрать. Чылай чух, унӑн сӑввисем танка е хокку виҫисене аса илтереҫҫӗ, вӗсенче сӑнланнӑ шухӑш яппун поэзийӗн мотивӗсене ҫывӑх тата дзен-буддизм философийӗ пурри те сисӗнет.

Мӗнрен пуҫланнӑ-ха чӑваш поэчӗн яппун поэзийӗпе, культурипе кӑсӑкланас туртӑм? Кунта, чӑн малтанах, Эйзинӑн литературӑри пултарулӑхӗ 60-мӗш ҫулсенче вӑй илме пуҫланине аса илмелле. Ҫак ҫулсем пирӗн литературӑра, уйрӑмах поэзире, ширав ҫулӗсем пулнипе палӑрчӗҫ. Ҫамрӑк поэтсем анлӑ колхоз уй-хирӗнче юрла-юрла ӗҫлени ҫинчен пӗр-ик сӑвӑ ҫырнӑ хыҫҫӑн шырав ҫулӗ ҫине тӑраҫҫӗ. Пурнӑҫа илемлӗ, хитре сӑнлама ыйтакан социализмла реализм йӗркисем вӗсене текех тивӗҫтермеҫҫӗ. Ҫӗнӗ ҫула уҫаканӗ Айхи пулса тӑрать. Вӑл сӑвӑ строфине те, йӗрке тытӑмне те, сӑвӑ интонацине те, сӑнарсен системине те ҫӗнӗлӗхсем кӗртет, тӗпрен улӑштарать. Айхи сӑвва кӗртнӗ ҫӗнетӳсем ытти сӑвӑҫсене те витӗм кӳрсе тӑраҫҫӗ. "Айхилле" ҫырма тытӑннисен шутӗнче Эйзин та пулнӑ. Эйзина поэзире хӑйнеевӗрлӗ курӑнма тӑрӑшни ҫӗнӗ мелсем тупма хистет. Тӗрлӗ халӑх поэзийӗпе, классики хушшинче ӑна пуринчен ытла кӗске, ансат сӑмахсемпе тарӑн шухӑш калама пултарнӑ яппун поэзийӗ тата чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ ҫывӑх килсе тухать. Айхин литературӑри тӗслӗхӗсем ӑна чӑваш чӗлхипе те чуна, чӗрене пырса тивекен сӑвӑсем ҫырма май пуррине кӑтартса параҫҫӗ. Эйзин, халӑх сӑмахлӑхӗн ӑс-хакӑлӗпе, пуянлӑхӗпе усӑ курса, тухӑҫ литературин традицийӗсем